чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР




"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

220/25875/№ Юн кун, 2011, чӳк (ноябрь), 16 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


# Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн

## Чăваш Республикин Президенчĕ М.В.Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çыру





Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

**Республика парламенчĕн 42-мĕш сессийĕнче Михаил Игнатьев Президент ĕнер хăйĕн ЧР Патшалăх Канашне тата Чăваш Ен халăхне янă Çырăвĕпе паллаштарчĕ. Ăна итлеме РФ Патшалăх Думин республикăран суйланнă депутачĕсем, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, Министрсен Кабинечĕн членĕсем, тĕрлĕ ведомство, учреждени, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ыттисем пухăннă.**

**Сехет çурă хушшинче Михаил Васильевич республикăн социаллă пурнăçпа экономика, политика лару-тăрăвне туллин хакларĕ, умра тăракан тĕллевсене пайăррăн палăртрĕ.**

**...Çырупа паллаштарнă хыççăн журналистсем патне пырса вĕсен ыйтăвĕсене хуравланă май Президент Çыру шăнăрĕнчи шухăша, «пĕтĕмпех çын валли, çыншăн» тенине çирĕплетсе çапла палăртрĕ: «Çынран хакли нимĕн те, никам та çук. Эпир çыннăн пурнăç шайне çĕклесси пирки нумай калаçатпăр. Паянхи Çыру хыççăн хамăр тата тăрăшарах ĕçлесе çынсен пурнăç шайне лайăхлатма пултарасси пирки иккĕленместĕп».**

**Ĕç коллективĕсенче пулнă май республикăра пурăнакансем ĕçлесшĕн çуннине курса ĕненнине çирĕплетрĕ, Чăваш Енре пурăнакансене тав турĕ: «Чăваш ĕç çыннисем пултаруллă, вĕсем малалла тăрăшса экономикăна аталантарасси куç кĕрет. Çакна курса тăнă, хакланă май кун пирки манăн пĕр иккĕленӳ те çук. Мĕншĕн тесен кам утать – вăл çула çĕнет».**

**Михаил Васильевич шухăшĕпе, республикăра пурăнакансем Çырăва тĕрлĕрен йышăнĕç – «эпир пурте тĕрлĕ вĕт». Министрсен Кабинечĕн шайĕнче вара Çырура палăртнă тĕллевсене пурнăçламалли татăклă мероприятисен планне йышăнмалла. «Тивĕçлĕ программăсенче должноçри яваплă çынсене, ĕçе пурнăçламалли вăхăта палăртăпăр, – терĕ Чăваш Ен пуçлăхĕ. – Ĕçе мĕнле пурнăçланине тимлĕ те çирĕп тĕрĕслесе тăрăпăр. Эпĕ Çырура мĕн калани – çынсен пурнăç шайне çĕклес тĕллевлĕ. Çакна тĕпе хурса пирĕн тата та çине тăрарах, лайăхрах ĕçлемелле. Экономика кал-кал аталанчĕ тĕк пурнăç пахалăхĕ те çĕкленĕ, çакăн пирки иккĕленместĕп».**

### Хисеплĕ депутатсем, хаклă ентешĕмĕрсем!

Халăх ырлăхĕ – чи аслă саккун. Влаç органĕсен пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ пĕртен пĕр çак тĕллеве пăхăнса тăмалла тата должноçри çынсен, мĕн пур шайри влаç органĕсен ĕçченĕсен пирĕн тивĕç çыншăн ĕçлесси пулнине самантлăха та манмалла мар. «Çынна мĕнле виçепе висĕн, хăвна та çавăнпах висĕç». Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне пин-пин çул çирĕплетекен халăх ăсĕ çапла вĕрентет, çавăнпа та пирĕн пурин те çак чăнлăха хамăрăн тавра курăмра тĕп вырăна хумалла тата кулленхи пурнăçри девиз евĕр йышăнмалла. Çырăва хатĕрленĕ вăхăтра эпĕ республикăра пурăнакансене хастартарах пулма, хăйсен граждан яваплăхне палăртма, сĕнĕвĕсене пĕлтерме ыйтса чĕнсе каларăм. Сĕнӳ чылай килчĕ, эпĕ çакăншăн пурне те чунтан тав тăватăп.

«АБС ЗЭиМ Автоматизаци» акционерсен обществин тĕп конструкторĕ Юрий Иванович Степанов, сăмах май, эпĕ унта нумаях пулмасть пулса курнăччĕ, чĕнсе каланине йышăнса хăйĕн сĕнĕвĕнче Çыру ятне улăштарса ăна Чăваш Ен халăхне Чĕнсе калани тесе палăртмалли çинчен çырать. Ахăртнех, çакă тĕрĕс те пулĕ. Çитменнине, хисеплĕ парламентарисем, сире кăна мар, республика гражданĕсене те тӳрремĕнех чĕнсе каламалли сăлтав паян нумай.

Пĕрремĕшĕнчен, нумаях пулмасть эпир Чăваш Ен Патшалăх Канашне республика бюджечĕн проектне тăратрăмăр. Йăлана кĕнĕ пекех бюджет социаллă тĕллевлĕ, унти тăкаксен виççĕ тăваттăмĕш пайĕ пирĕн граждансемшĕн чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе çыхăннă. Çавăнпа та республика пуçлăхĕ пулнă май çав бюджет обязательствисене пурне те пурнăçлассине пĕтĕм яваплăхпа пĕлтеретĕп.

Иккĕмĕшĕнчен, хальхи лару-тăру суйлав умĕнхи пулнипе палăрса тăрать. Вăл общество пурнăçĕ çине хăйне майлă витĕм кӳрет, апла пулсан граждансен шухăшкăмăлĕнче те палăрмасăр юлмасть, çавăнпа та ку енĕпе хам мĕн шухăшланине асăнса хăвармасăр пултараймастăп. Суйлав теми суйлавçăшăн яланах йывăр та хĕрӳллĕ тема шутланать, чи пĕлтерĕшли вара – йăлана кĕнĕ пекех унта йӳнĕ популизм та, куç кĕрет ултав та туллиех.

Чылай тупăшакан вăйсен, тавлашакан кандидатсен тĕллевĕ политика пурнăçне йывăрлатса кăтартасси, суйлавçа сехĕрлентересси пулса тăрать. Çавăн пекех экономика статистикине пĕлсех кайман, ăна-кăна питех чухламаннине пула, тен, тата йăнăшнăран та, çăмăллăнах ĕненекен, вăйра тăракан влаçа, ăна суйлав тапхăрĕнче яланах тапăнаççĕ, айăпласа каланă кирек мĕнле сăмаха та çывăха илекен çынсене тăрăшсах пăтраштарма хăтланаççĕ. Анчах та пирĕн халăх кун пирки çапла калать: «Турпас тăвакана мар, пӳрт лартакана платник теççĕ». Шантарсах калама пултаратăп: пуçланă кирек мĕнле ĕçе те эпир вĕçне çитернĕ. Хăшĕ-пĕри пек пулăмсене хитрелетсе кăтартман. Йывăрлăхсене пăхмасăр, пурнăçлама пултарайманнине нихăçан та шантарман, шантармастпăр та. Ку манăн, Президентăн, принциплă позицийĕ шутланать. Çавăнпа та пурсăра та кирек мĕнле информаци илнĕ чухне те тимлĕ тата яваплă пулма ыйтатăп.

**Тĕрĕссипе каласан, пирĕн лару-тăру çирĕп** тата мана, республика ертӳçине, пит темлех пăшăрхантармасть. Чăваш Ен тăрăх тухса çӳрекен йышлă çул çӳрев вăхăтĕнче хам куçпа курни, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулни çынсем пуш сăмах çаптарас шухăшлă мар, ĕçлес тĕллевлĕ пулнине çирĕплетеççĕ. Çавăнпа та коллективсем ертӳçĕсемпе пĕрле лайăх кăтарту тăвассишĕн ĕçлекен вырăнта çирĕплĕх те, ыранхи кун шанчăклăхĕ те пур.

Ку кăна та мар, юлашки икĕ çул хушшинче экономикăна кризисран тухма пулăшса хăйсен ĕç вырăнĕнче яваплăха туйса тăрăшнă Чăваш Енри мĕн пур çынна манăн тав тума та сăлтав пур. Эпир республикăн социаллă пурнăçпа экономика кăтартăвĕсене палăрмаллах лайăхлатрăмăр. 2010 çултан пуçласа экономикăн пĕтĕм тĕп кăтартăвĕ енĕпе çирĕп ӳсĕм палăрать.

Эпĕ 2011 çулта экономика аталанăвĕн кризисченхи шайне тухма тĕллев лартнăччĕ. Цифрăсем амбициллĕ пулин те – эпир çакна тума пултартăмăр. Регионти пĕтĕмĕшле продукт калăпăшне 199 миллиард тенке çитерме палăртнăччĕ, чăннипе вăл 200 миллиард тенкĕрен кая мар пулать. Кăçал тĕп капитала хывакан инвестицисен хисепĕ 55 миллиард тенкĕ шайне çитет. Иртнĕ çул тухăçлă пулчĕ: Чăваш Енре промышленноçпа ял хуçалăх производствин индексне Раççейри вăтам кăтартуран пысăкрах шая çитернĕ, ку кăтарту строительствăра та, вак суту-илӳре те пысăкрах, халăхăн укçа-тенкĕн чăн тупăшĕсем те ӳснĕ. Куллен кирлĕ апат-çимĕç хакĕсем ӳсесси те пирĕн патра пĕчĕк шайра. Апат-çимĕç таварĕсен потребитель хакĕсен индексĕ енĕпе Чăваш Республики федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче Чулхула облаçĕпе тата Мари Республикипе пĕрле иккĕмĕш вырăнта тăрать.

Пирĕн çӳллĕ рейтинга Пĕтĕм тĕнчери агентствăсем тепĕр хут çирĕплетрĕç, çакă Чăваш Енĕн инвестици илĕртӳлĕхне лайăх хак пани тата ĕçсем чăннипе мĕнлерех пынине палăртни шутланать. Экономика ӳсĕмĕ, патшалăх парăмне тивĕçтерме каякан тăкаксене вырăнлăрах туни, федераци бюджечĕн укçи-тенкине явăçтарни республика бюджетне палăрмаллах лайăхлатма май пачĕç. Эпир çулталăкри тупăшсен калăпăшне – 32,4 процент, тăкаксенне вара 42,6 процент ӳстерме пултартăмăр. Çав укçа-тенке çын вăй-хăватне аталантарма уйăртăмăр, мĕншĕн тесен унран хаклăраххи урăх çук.

Промышленноç хăйĕн хăвăртлăхне сыхласа хăварни пире 10 уйăхри кăтартусем енĕпе федерацин Атăлçи округĕнче малта пыракансен йышне кĕме май пачĕ. Экономика ĕçĕ-хĕлĕнчи тирпейлекен производствăсен 12 тĕсĕнчен тăххăрăшĕнче производство индексне ӳстернĕ, ĕç тухăçлăхĕ кунта 20 процент ытларах пысăкланнă. Пурăнмалли çурт-йĕр хута ярас ĕç индексĕ пирĕн çулран-çул Раççейре чи лайăххи. Эпир пурăнмалли çурт-йĕр строительствин хăвăртлăхне сыхласа хăвартăмăр – ку кăтартупа эпир йăлана кĕнĕ пекех Раççейре малти вырăнта тăратпăр. Тата çакна палăртас тетĕп: пурăнмалли çурт-йĕрĕн 50 процентне пирĕн ял çĕрĕнче çĕклеççĕ, çакă ял халăхĕ тĕлĕшпе тытса пыракан патшалăх политики ăна пулăшассине тĕп вырăна хунине çирĕплетет, çавна пулах эпир Чăваш Енре пĕр яла та çухатмарăмăр.

Ял хуçалăх отраслĕнче те çĕр ĕçченĕсене тав тума сăлтав пур. Типĕ те шăрăх çанталăклă 2010 çул хыççăн вĕсем тăвату хут ытларах /малтанлăха шута илнă виçепе/ тыр-пул тата тухăçлăхĕ икĕ хут ытларах ӳснине кура çавăн пекех икĕ хут ытларах çĕр улми ӳстерсе пухса кĕртме пултарчĕç. Хăйсем пăхса ӳстернĕ ял хуçалăх çимĕçĕсемпе халăха хĕл валли çителĕклĕ тивĕçтерчĕç, çав шутра йышлă ярмăрккасенче те /посредниксемсĕр йĕркеленĕ суту-илӳ ĕçĕ хула çыннисене сакăр миллион тенке яхăн укçа-тенкĕ перекетлеме май панă/. Пирĕн çавăн пекех аш-какай тата çăмарта туса илесси, мĕн пур категорири хуçалăхсенчи ĕнесен шучĕ те ӳснĕ. Ял хуçалăх производствин хăвăртлăхĕн ӳсĕмĕ енĕпе Чăваш Ен Атăлçи федераци округне кĕрекен регионсен хушшинче пиллĕкмĕш вырăн йышăннă.

Чăваш Ен экономикин лайăх аталанăвĕ тытăмлă йышăнусем тума май пачĕ. Хальхи **Чăваш Ен экономикăна экспортпа чĕр тавар никĕсĕ çинче аталантарнинчен инновацин аталану çине куçармалли стратегие** машинăсем тăвассине, электротехникăпа агропромышленноç комплексĕсене, строительство ĕçне, информаци технологийĕсене, предпринимательлĕхе приоритетлă майпа аталантарса пурнăçа кĕртет. Раççей Финанс министерстви пирĕн республикăна çĕр-шывăн «электрон бюджетне» ĕçлеттерме суйласа илнĕ пилотлă виçĕ регион шутне кĕртни вара эпир бюджет «енчĕкĕпе» пысăк ăсталăхпа ĕçленине тата пирĕн çак сферăри ĕçе пысăк хак панине çирĕплетет.

Манăн политикăри оппонентсем суйлав умĕнхи лару-тăру шайĕнче республикăн патшалăх парăмĕн темине çĕклеççĕ, анчах та яваплăн пĕлтеретĕп: Чăваш Ен хăйĕн парăм обязательствисене парăм шайне ăнăçлăн чакарса пурнăçласа пырать тата чи малтан тӳлемелли социаллă пĕлтерĕшлĕ тӳлевсене вăхăтра та туллин тӳлет, çавна май тата хăй çине социаллă çĕнĕ обязательствăсем те илчĕ. Иртсе пыракан çулта патшалăх парăмне тухăçлăн пурнăçланине пула эпир 76,4 миллион тенкĕ перекетлерĕмĕр. Кăçал эпир тăвату миллиард тенкĕ тавăрса паратпăр, çитес çул вара – пилĕк миллиард тенке яхăн, эпир çакна графикпа килĕшӳллĕн пурнăçлатпăр, кунта нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Сирĕнтен кашниншĕнех ыранхи кун шанчăклăхĕ тата паянхи пурнăç хăтлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çыннăн ĕç пулмалла, ăна тивĕçлĕ шалу тӳлемелле, вăл пурнăçра хăйне хăрушлăхсăр туймалла, тавралăх экологийĕ йĕркеллĕ пулнине пĕлсе тăмалла, сывлăх сыхлавĕ тата вĕренӳ паракан лайăх пахалăхлă пулăшусемпе, культура еткерĕпе усă курма пултармалла. Ăнăçлă çын кăна телейлĕ ашшĕ-амăшĕ тата пархатарлă еткерçĕ пулать, çĕр-шыва аталантармалли чăн вăй пулма пултарать. Унсăрăн унăн пурнăçĕ кулленхи йывăрлăхсене çĕнтерессипе çыхăннă асаплă кун-çула çаврăнать. Мĕн пур влаç органĕсен, пирĕн пурин те, уйрăмах вара республика Президенчĕн тĕп тĕллевĕ, – пирĕн граждансен пурнăç пахалăхне лайăхлатасси. Мĕншĕн тесен тĕп вырăнта – çын, тĕп тĕллев те – вăлах. «Çынна пани сая каймасть», – теççĕ.

**Иртнĕ çул ку тĕлĕшпе эпир пĕлтерĕшлĕ темиçе задачăна татса патăмăр.**

Пĕрремĕшĕнчен, **ĕççĕрлĕхе чакарас енĕпе** эпир виçĕ çул тытăмлăн ĕçлерĕмĕр. Çĕнетекен предприятисенче ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварма, кадрсене маларах вĕрентсе хатĕрлеме, хăй ĕçне йĕркелесе яма грантсем пама 3 миллиард та 345 миллион тенкĕ уйăртăмăр. Пĕтĕмпе патшалăх пулăшăвĕ памалли 20 ытла çул-йĕре пурнăçланă.

• 2 стр. ➡

## Саламлатпăр

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 1487-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн наукăпа педагогикăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн, квалификациллĕ специалистсем хатĕрлессине пысăк тӳпе хывнăшăн федерацин аслă професси пĕлĕвĕ паракан «И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ» патшалăх вĕренӳ учрежденийĕн профессорне **Валерий Алексеевич НЕСТЕРИНА «РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН АСЛĂ ШКУЛĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

## *Максим Михайлов ячĕпе – 21-мĕш хут*

М.Д.Михайлов ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери опера фестивалĕ – Чăваш Ен пурнăçĕнчи музыкăпа çыхăннă чи паллă пулăм. Кăçал вăл 21-мĕш хут иртĕ. Çак кунсенче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче асăннă фестивале йĕркелессипе çыхăннă пресс-конференци пулнă.

Театрăн директорĕ тата тĕп режиссерĕ Максим Жучин, пултарулăх ертӳçи тата тĕп дирижерĕ Ольга Нестерова, балет труппин пултарулăх ертӳçи Данил Салимбаев, тĕп художникĕ Валентин Федоров журналистсене фестиваль программипе паллаштарнă. Вăл чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕнче премьерăпа – Ж.Оффенбахăн «Сказки Гофмана» ĕçпе – уçăлĕ. 24-мĕшĕнче вара вырăс опера искусствин шедеврĕ – М.Мусоргскин «Борис Годунов» опери сцена çине тухĕ. Тепĕр кун бассен концертĕнче вырăс тата чикĕ леш енчи композиторсен опера арийĕсем янăрĕç. Чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче В.Моцартăн «Свадьба Фигаро» камит оперине Питĕрти Мариинка театрĕн солисчĕсем хутшăнĕç.

Фестиваль чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче гала-концертпа хупăнĕ. Шăпах çав кун «Нарспи» опера авторĕ Г.Хирбю çуралнăранпа 100 çул çитет. Концерта композитор юбилейне халалланă. Программăна «Нарспи» оперăри арисемпе сценăсем илемлетĕç.

Чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче Канашри культура керменĕн сцени çинче те гала-концерт иртĕ.

**Н.СМИРНОВА.**

## *Ветеран – 100 çулта*

Çак кунсенче Красноармейски районĕнчи Павел Трофимов 100 çул тултарнă. Вăл паттăрлăхшăн хăй вăхăтĕнче I степень Тăван çĕр-шывăн вăрçин орденне, йышлă медале тивĕçнĕ. Павел Трофимович Упи ял тăрăхĕнчи Тусайра пурăнать.

Трофимовсен тăхăр ача, вĕсенчен улттăшĕ çак тăрăхрах тĕпленнĕ. Халĕ мăнукĕсем те мăнуклă пулма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Павел Трофимович мăшăрĕ Евдокия Федоровна 2003 çулта пурнăçран уйрăлнă, ветерана кил-хуçалăха тытса пыма тăванĕсем пулăшаççĕ.

Павел Трофимович нумай çул ял хуçалăхĕн "Досаево" эртел бригадирĕнче вăй хунă. Вăл халĕ те ял-йышра хисепре.

**Т.ВАСИЛЬЕВА.**

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çăвать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4, çĕрле 10 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 742 мм, сывлăшри нӳрĕк 86 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 16 минут.**

Ыран улшăнса тăракан çанталăк пулать, юр çăвать. Çил кăнтăртан çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3, çĕрле 11 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 738 мм, сывлăшри нӳрĕк 89 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 11 минут.**